

# Чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ Константин Васильевич Иванов 125 çулта

# Константин Иванов



чăваш халăхĕн мăнаçлăхĕпе мухтавĕ, çĕнĕ çырулла сăмахлăха пуçараканĕ, хура халăха çутта туртаканĕ. Ăна пурте пĕр камăллăн чăваш сăмахлăхĕн классикĕ тесе хисеплетпĕр.

# Семья



Мать поэта
Евдокия Васильевна



Отец поэта
Василий Николаевич

Константин Васильевич Иванов Пушкăртстанти Пелепей районĕнче, Слакпуç ялĕнче 1890 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче çуралнă. Василий Николаевичпа Евдокия Васильевна Ивановсем хăйсен ывăлне вĕрентме тăрашнă, Константина 8 çултах ялти пуçламăш шкула янă. Унта виçĕ çул пĕлӳ пухнă хыççăн Пелепейри хула училищинче вĕренет.

# Вĕренӳ çулĕсем






Тăрăшуллă та ăнкаруллăскер вăл 1903 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн вĕренекенĕ пулса тăрать. Унăн малашнехи пурнăçĕ пĕтĕмпех И. Я. Яковлев уçнă çак шкулпа, Раççей империйĕнчи чăвашсем валли семинари йĕркипе ĕçлекен пĕртен-пĕр вĕренӳ çурчĕпе çыхăннă: унта вăл малтан шкул ачи пулнă, кайран хăй вĕрентӳçе тухнă. Кунта вăл пултарулăх ĕçĕн таса телейне те, тӳрлетейми çӳхатусен тискер хурлăхне те чăтса курнă.

# К. Иванов -нумай енлĕ талант



пултаруллă куçаруçă,
художник-иллюстратор,
декоратор,
фотограф,
фольклорист,
поэт

# Пултаруллă куçаруçă



И. Я. Яковлев «пăлхавçăсен» шăв-шавĕ лăпланнă хыççăн хăй патне тĕн кĕнекисем чăвашла куçарма чĕнсе илет. К. Иванов Библи куçарас ĕçре вăй хурать. Вăл чăвашла вĕренӳ кĕнекисене те редакцилет, корректурине вулать, калавсемпе юмахсем куçарать. М. Лермонтов, Н. Огарев, А. Кольцов, Н. Некрасов, А. Майков сăввисемпе поэмисене, Л. Толстойпа К. Ушинский калавĕсене тĕлĕнмелле çыпăçуллă шăратса кăларать. Ытларах М. Лермонтов хайлавĕсемпе кăсăкланать.




## Парăс

Пĕччен парăс шуррăн курăнать
Кăвак тинĕс тĕтри ăшĕнче...
Мĕн инçе, ют çĕрте вăл шырать?
Мĕн хăварнă вăл хăй килĕнче?

Чӳхенеççĕ хумсем, çил улать,
Шăтăр-шатăр юпа авăнать…
Анчах парăс телей шырамасть,
Телейрен те тарса вăл кайматъ!

Çутă юхăм унăн айĕнче,
Çӳлтен ылттăн хĕвел çутать;
Канăçсăр! Çил-тăвăл шавĕнче
Канлĕх пур пек, тăвăл вăл вăл ыйтать.

**М. Лермонтов**



Кольцов Алексей Васильевич

Сивĕ çил вĕрет,
Хаяр çил вĕрет,
Пĕлĕчĕ шăвать,
Хуп-хура пĕлĕт.

Курăнмасть унта
Çутă кун çутти.
Курăнмасть унта
Çут хĕвел çутти.

Сĕм-тĕттĕм çĕрте
Тĕтресем витĕр
Хура каç анчах
Хуралса тăрать.

Çакăн пек вăхăт,
Çак усал вăхăт
Пĕр-пĕччен çынна
Чĕрине хĕсет.

**А. Кольцов**






Хресчен тăрать –
Тайкаланать,
Хресчен пырать –
Сывлаймасть те!
Ҫăкăр хытти
Пĕрсе янă,
Хуйхи-суйхи
Халран янă.
Хура пичĕ
Кĕленче пек, -
Ӳсĕр ҫын та
Ун пек пулмĕ.

**Н.А. Некрасов**






Усал шăрăх
Пĕр пĕлĕт çук, хĕвел çунать,
Кăвак пĕлĕт йăлтăрать,
Пăчă сывлăш вĕри тăрать,
Мĕскĕн чечек сарăхать.
Ыраш ани типсе кайнă,
Пучахĕ ун саралнă.
Пирĕн çырман шывĕ чакнă,
Пирĕн арман лăпланнă.

**Н. Огарев**





# Бальмонт Константин Дмитриевич



**Кĕркунне**

Шăнтать ĕнтĕ кунсерен,
Çитрĕ ĕнтĕ кĕркунне.
Вĕçен кайăк сассинчен
Хуйхă кĕрет чĕрене.
Карти-карти кайăксем
Вĕçеç тинĕс леш енне.
Тăхăннă йăвăçĕсем
Пурте сарă тумтирне.
Хĕвел курать сайрарах,
Шăрши пĕтнĕ чечексен,
Йĕрсе ярĕ ак часах
Кĕркунне те, вăрансан.

**К. Бальмонт**




Чĕкеç- чĕкеç- чĕкеçĕ
Кунĕпе вĕçсе çӳрерĕ,
Улăм пĕрчи пуçтарчĕ ,
Тăмпа шăлса çыпăçтарчĕ,
Хăйне йăва çавă
Хăйне йăва çавăрчĕ
Çăмартасем турĕ те,
Çăмарта тума тытăнчĕ
Йăви çинчен анмасть те,
Чĕп тухасса кĕтет вăл.
Акă чĕпĕ кăларчĕ:
Чĕпписем ун чăйлатаççĕ,
Çиме апат ыйтаççĕ.
Чĕкеç- чĕкеç- чĕкеçĕ,
Кунĕпе вĕçсе çӳрет вăл,
Пĕртте канма пĕлмет вăл:
Шăна –păван пуçтарать,
Чĕпписене тăрантарать.

**К.Д. Ушинский**

# Алă ăсти

Чĕмпĕр шкулĕнчи мастерскойне çӳресе унта йывăçран тĕрлĕ япаласем касса ăсталама вĕренет. Сĕтел-пукан, чӳрече-алăк тăвасси те çыпăçать унăн.



Мастерскойне çӳресе унти столярпа туслашать, хăма çине унăн портретне ӳкерет. Çавна курсан И.Я. Яковлев хытă тĕлĕнет, пултаруллă художник тупăннишĕн савăнать.



К. Иванов сăрсемпа ӳкерме тытăнать. Хăйĕн ашшĕпе амăшĕн портречĕсене те ӳкерет. Питĕрти Илемĕш академине кĕмелли экзаменсене те хатĕрленет…

# Художник-иллюстратор …

Ӳнер ăсталăхне вара ĕмĕр тăршшĕпех чĕререн юратнă. Константин Иванов – худоник-иллюстратор та. Чĕмпĕр шкулĕнче тухса тăракан чăваш букварĕ валли тĕрлĕ иллюстрацисем туса хатĕрлет.



# Фольклорист

К. Иванов лирикипе лиро-эпики тăван халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăхĕнчен тымарланса тухнă. Мĕн ачаран Константин халăх юмах-халапне итлеме юратса çитĕннĕ. Каярах, тăван килĕнче пулма май килнĕ вăхăтра та халăх самахлăхне çыра-çыра илнĕ. Нарспин прототипĕ те ялти Нарспи карчăк каласа панă юмахран тесе çырса хăварни пур.







# Поэт




«Нарспи» поэма,

«Хальхи самана» сăвă,

«Шуйттан чури» трагеди,

«Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă»

«Тăлăх арăм» сăвăлла

юмах-халапсем.

# Поэма «Нарспи»






«Нарспи» поэма - К. Иванов çырнă произведенисенчен чи хакли. Чăваш поэчĕн ятне аякри çĕршывсен тĕрлĕ чĕлхеллĕ энциклопедийĕсене кĕртнĕ; «Нарспи» поэмăна тĕнче классикин шедеврĕсемпе пĕрле пичетленĕ. Вахăтсăр сӳнет пэтăн пурнăçĕ. Анчах çулсем иртсен те унăн ячĕ çăлтăр евĕр литература тӳпинче ялкăшса тăрĕ. «Нарспи» çути - сӳнми.










Пурнăçăн тĕрлĕ тапхăрĕнче Иванов патне «таврăнсах» тăратпăр. «Нарспи» поэмăпа виçĕ опера çырнă, балет лартнă, 2008-мĕш çулта Б. Чиндыков драматургпа Н. Казаков композитор хатĕрленĕ мюзикл та тухрĕ сцена çине. Чăваш ӳкерӳçисем çултан-çул «Нарспи» поэмăна çĕнĕрен курăмсемпе ăсталаççĕ.







Скульпторсем Иванов кӳлепине вилӗмсӗр пурнӑç парнелеççӗ. Парксемпе музейсем, театр ун ячӗпе хисепленсе тӑраççӗ. Иванов çырнӑ йӗркесем, ваттисен сӑмахӗсем пек, халӑх хушшинче çӳреççӗ. Поэтсем тӑтӑшах Константин Ивановпа Слакпуçне сӑвӑсем халалласçӗ. Литературӑпа искусствӑри чи лайӑх хайлавсемшӗн çуллен К. Иванов ячӗпе хисепленекен Чӑваш патшалӑх премине параççӗ.






Çак çĕр çинче чĕрĕк ĕмĕр те пурăнайман аслă поэтăмăр, анчах вăл Чăваш Сăмахне чун кĕртсе вилĕмсĕрлĕхе çул хывма ĕлкĕрнĕ. «Нарспи» поэмине 19 чĕлхе çине куçарнă. Поэмăна Чăваш наци библиотеки тĕрлĕ-тĕрлĕ чĕлхепе вулассипе проект хатĕрленĕ. Сире, ачасем, «Нарспи» поэмине вырăсла, тутарла, çармăçла, якутла, венгерла, пăлхарла, французла, акалчанла, нимĕçле вуланине курма сĕнетпĕр.



# Чăваш поэзийĕн çăлтăрĕ

## Константин Васильевич Иванов

## 125 çулта